25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
АПРЕЛЬ
11
ШĂМАТКУН
85 (6020) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

СОВЕТ ПАТРИОЧĔСЕН МАЙ УЯВĔ УМĔНХИ ĂМĂРТĂВĔ

Çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче—Мускавра та Владивостокра, Ленинградра та Севастопольре, Уралра та Кавказра, Çĕпĕрте те Атăл тăрăхĕнче—Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвăн хĕлхемĕсем ялкăшса кайрĕç. Çак ăмăрту вăл ĕç уявне производствăри çĕнĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илес йăла тăрăх, çак лайăх йăла тăрăх пуçланса кайрĕ. Кăçал эпир Майăн 1-мĕшĕ патне нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç пыракан хаяр çапăçусен çулăмĕ витĕр утса пыратпăр. Кашни совет çыннин чĕри мĕн тери хытăрах тапать, унăн ĕçĕ çавăн чухлĕ паттăртарах пулать, унăн фронта пулăшас туртăмĕ, тăшмана çапса аркатмашкăн Хĕрлĕ Çара пулăшас хăмăлĕ çавăн чухлĕ вăйлăрах пулать.

— Фронта хĕçпăшал, боеприпассем, снаряжени ытларах парар!—çакăн пек ĕнтĕ пирĕн рабочисен Май уявĕ умĕнхи ăмăртури лозунгĕ.

— Фронтпа çĕршыва тырă, аш-какай, сахăр, пахча-çимĕç ытларах парар!—çакăн пек пирĕн колхозниксен лозунгĕ.

— Войскăсемпе фронт валли хĕçпăшал, промышленность валли чĕртавар ытларах тиер, тиенĕ эшелонсене часрах çӳретер!—çакăн пек пирĕн железнодорожниксен лозунгĕ.

Майăн 1-мĕшĕ мирлĕ вăхăтра пирĕншĕн çуркуннехи савăнăçлă уяв пулнă. Халĕ ĕнтĕ вăл гитлерла захватчиксене пуçĕпех пĕтерсе тăкассишĕн çапăçмалли тата Хĕрлĕ Çарпа халăхăн мĕнпур вăйĕсене мобилизацилемелли кун пулса тăрĕ.

Гитлерăн банди хăйĕн «çуркуннехи наступленийĕ» çинчен пĕтĕм тĕнчипе кăшкăрса çуйăхать. Вăл çапла туса совет халăхне хăратасшăн, совет çĕршывĕшĕн кĕрешнĕ чухне нимĕнрен хăраман Хĕрлĕ Çара хăратасшăн. Ку ĕмĕтсем унăн ахалех пулĕç! Хĕрлĕ Çар нимĕçсен войскисене хирĕç хĕлĕн чи йывăр условийĕсенче контрнаступлени туса пычĕ. Шартлама сивĕсемпе тарăн юр та, тăшман хаярăн хирĕç тăни те наступленилле çапăçусен пуçарулăхне Хĕрлĕ Çар аллинчен вĕçертеймерĕ. Çуркунне эпир нимĕçсене татах та хытăрах çапăпăр!

Нимĕçсем çуркунне валли войскăсем, танксем, самолетсем хатĕрленĕ. Хĕле эпир те пĕр ĕçсĕрех пурăнса ирттермерĕмĕр. Хĕлле эпир контрнаступлени çеç туман, резервсем те хатĕрленĕ. Фашистсене хирĕç пирĕн çĕнĕ дивизисем тухĕç, хĕвел ăшăтнă çĕр тăрăх çĕнĕ танксем кайĕç, çуркуннехи сенкер тӳпене çĕнĕ самолетсем хăпарĕç.

— Наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйпа пулăшар! Çуркуннепе çулла фашистсене татах та хăватлăнрах пырса çапса, 1942 çула нимĕç оккупанчĕсене тĕппипех аркатса тăкмалли çул туса хурар!—акă мĕншĕн кĕрешеççĕ совет патриочĕсем, акă мĕн çырнă Май уявĕ умĕнхи ăмăртăвăн ялавĕсем çине.

Бригадăсен, сменăсен, цехсен, заводсен коллективĕсем, Майăн 1-мĕш ячĕпе производствăн икĕ уйăхри тата кварталри планне срокчен пурнăçлама пулса, хăйсем çине обязательствăсем илеççĕ. Колхозниксемпе совхозсенчи рабочисем çуркуннехи акана кăтартуллăн ирттерме пулаççĕ. Железнодорожниксем—паровозсемпе вагонсен çаврăнăшне ӳстерме, поездсен хăвăртлăхне хăпартма, водниксем—навигацие ăнăçлă пуçлама, пулăçăсем—çуркунне пулă лайăхрах тытма, вăрман хатĕрлекенсем—каснă йывăçсене шыв тăрăх юхтарассине отлично организацилеме, торфяниксем—электростанцисемпе заводсене вырăнти топливо ытларах парса тăма сăмах параççĕ.

Пирĕн çĕршывра вăл çакăн пек пулса пырать те ĕнтĕ: сăмах панă хыççăн ĕç пуçланать. Ĕççыннисем тăван çĕршыв оборонин фондне производствăллă парнесем нумай хывнă ĕнтĕ.

Акă Май уявĕ умĕнхи ăмăртушăн кăтартуллă пулса тăракан икĕ факт.

Пĕрремĕш факт. Çар заводĕсенчен пĕрин коллективĕ хăйĕн облаçĕнчи ĕççыннисене Майăн пĕрремĕшне производствăра çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илме чĕннĕ. Вăл хăйĕн çине çакăн пек обязательствăсем илнĕ: иккĕмĕш кварталăн программине срокчен пурнăçламалла, планран ирттерсе нумай хĕçпăшал туса кăлармалла. Нумаях та вăхăт иртмерĕ,—пирвайхи результатсем ĕнтĕ куç умĕнчех: малта пыракан рабочисем пысăк ĕç тухăçлăхĕн тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

Çав заводăн работници Минькова юлташ виçĕ профессие—токарь профессине, сверловщица профессине тата фрезеровщица профессине вĕренсе алла илнĕ. Ăна хĕçпăшал валли детальсем туса ĕлкĕреймен сверловщиксен ушкăнне пулăшма янă. Мастер Миньковăна норма тăрăх пĕр сменăра миçе деталь хатĕрлемеллине каламан. Ку ыйту Минькова юлташа интереслентермен те. Вăл çав заказа нимĕнле нормăсене пăхмасăрах чи кĕске вăхăтра пурнăçлама шут тытнă. Минькова 150 деталь туса хатĕрленĕ, ку вăл заданире кăтартнинчен икĕ хут çурă ытларах пулать. Участок вара заказа вăхăтра пурнăçланă.

Иккĕмĕш факт. Кузнецкри Сталин ячĕпе тăракан металлурги заводĕнчи блюмингăн коллективĕ, Магнитогорскри Сталин ячĕпе тăракан комбинатăн блюминговецĕсемпе Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса ăмăртса, планран ирттерсе 1.019 тонна хурçă панă. Ку вăл вунпар танксем валли çителĕклĕ хурçă пулса тăрать.

Çакăн пек ĕçлемелле те ĕнтĕ оборона валли, рабочисемпе работница юлташсем, инженерсемпе техник юлташсем!

Çĕршывăн кăнтăр енчи районĕсенче суракки пуçланнă. Арменирен çапла пĕлтереççĕ: Ноемберянски районри Ламбалу, Тури Кертлу тата Анат Кертлу ялĕсенчи колхозниксем тĕшшырăсене срокчен акса пĕтернĕ, халĕ ĕнтĕ пахча-çимĕçсемпе техникăлла культурăсем акма хатĕрленеççĕ. Ноемберянски МТС-ра 16 трактористран 12-шĕ—хĕрарăмсем. Вĕсенчен хăшпĕрисем Хĕрлĕ Çара кайнă упăшкисемпе пиччĕшĕсем вырăнне ĕçе тăнă. Суракки малтанхи кунĕсенче, кадрсем çамрăк пулсан та, пĕр трактор та чарăнса ĕçсĕр ларман. Трактористсем Зурабянсем—амăшĕпе 15 çулти ывăлĕ—пĕр трактор çинче пĕрле ĕçлекенскерсем, планра кăтартнинчен чылай ытларах çĕр сухаланă, çав вăхăтрах тата вĕсем горючи перекетлесе хăварнă.

Пурин те çапла ĕçлемелле, колхозниксемпе колхозница, трактористсемпе трактористка юлташсем!

Парти, комсомол тата профсоюз организацийĕсен Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту чăннипех **массăллă** ăмăрту пултăр тесе тăрăшмалла. Чылай вырăнсенче ăмăртăва пирĕн малта пыракан çынсем хутшăнса ĕçлеççĕ. Вĕсен çитĕнĕвĕсене пĕтĕм çĕршыв хĕпĕртесе йышăнать. «Двухсотниксем», «трехсотниксем», «тысячниксем», вунăшар норма тăваканскерсем, çĕнĕрен-çĕнĕ çĕнтерӳ туни çинчен калакан кашни çĕнĕ хыпар пĕтĕм халăха хавхалантарать. **Анчах кая юлакансем çинчен те манма юрамасть.** Задача çакăн пек: Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва мĕнпур ĕçлекенсене хутшăнтармалла, производствăра пурте хавхаланса çĕкленсе ĕçленĕ условисенче кая юлакансене малтисем таран ӳстермелле, пирĕн предприятисенче, транспортра, колхозсемпе совхозсенче нормăсене пурнăçламан çынсем ан пулччăр.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртура, социализмлă ăмăртура кирек хăшинче те, чи хăрушши, чи сиенли вăл—пĕччен çынсен уйрăм рекорчĕсем пирки, вĕсем питĕ паха пулин те, парадри пек шавлани пулса тăрать. Ăмăрту ĕçĕ çине ăмăртакансен хисепне статистика енĕпе шута илсе кăна пăхнинчен сиенлĕрехи урăх нимĕн те çук. Пуху тухаççĕ те, обязательствăсемшĕн сасă параççĕ те, вара пурне те ăмăртакансем тесе шутлама тытăнаççĕ. Çапла, акă, чугунçул çинче лунинла методсене чăннипе сарас вырăнне пурне те ушкăнĕпе лунинецсен шутне кĕртсе яраççĕ.

Ăмăртăва ăна **организацилес пулать,** обязательствăсене кашни ăмăртакан çын конкретнăрах тутăр, çав обязательствăсене пурнăçланине тĕрĕслесе пырас пулать, вĕсен результачĕсене пĕтĕм коллектив пĕлтĕр. Обществăллă шухăшăн вăйĕ—пысăк вăй. Ăмăрту мĕнле пыни çинчен пурне те пĕлтерсе тăни вăл малта пыракансене хисеплеме кăна мар пулăшĕ, вăл тата кайра пыракансене те малалла тĕртме, васкамасăр ĕçлекенсене хистеме пулăшĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва рабочисемпе работницăсен çĕнĕ кадрĕсене хутшăнтарасси питĕ те кирлĕ ĕç пулса тăрать. Ăмăрту вĕсемшĕн—ĕçĕн социализмлă меточĕсене вĕрентмелли чи кирлĕ шкул пулса тăрать.

Хăйсен планĕсене пурнăçлакан предприятисемпе юнашарах тата хăйсен программисене пурнăçламан, вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлемен предприятисем те пур-ха. Çавăн пек предприятисенче рабочисем фронт валли хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеме хатĕр. Анчах производствăна организацилес ĕçри çитменлĕхсем ĕçĕн результачĕсене чакараççĕ. Производство командирĕсен тата парти организацийĕсен задачи çакăн пек: çав çитменлĕхсене çине тăрса татăклăнах пĕтермелле, программăна тултарса пымалла тăвас пулать, вăрçă заказĕсене **кашни** предприятирех, **кашни** цехрах пĕр пăркаланмасăр, нимĕ пăхмасăр пурнăçламалла тăвас пулать.

Майăн 1-мĕшне отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче тата фронта пулăшакан тылра, нимĕç оккупанчĕсене пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшакан тылра, çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илер!

(«Правда», апрелĕн 9-мĕшĕнчи умстатья).

Государствăна сĕт параççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Аслă Чемен ялсоветĕнчи «Парижская Коммуна», «Трудовик» колхозсем государствăна сĕт тăрамалли хăйсен обязательствине ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. «Трудовик» колхоз çак иртнĕ икĕ уйăхра государствăна 2.000 литр сĕт панă.

И. МИТРОФАНОВ.

Суракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

64. **Шăхасан районĕнчи Шăпăлка ялсоветне кĕрекен «Пинеры» колхоз** (колхоз председателĕ **К. В. Викторов** юлташ). Колхоз çуракинче акма кирлĕ вăрлăха пурне те сортласа хатĕрлесе хунă, акма юрăхлă кондицие çитернĕ. Хире 1.580 лав тислĕк кăларнă, 53 центнер кĕл, 45 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 8,5 тонна минераллă удобрени турттарса килнĕ. Ялхуçалăх машинисемпе лапа кӳлмелли хатĕрсене пĕтĕмпех юсаса хунă.

65. **Мария Сергеевна Назарова**—Улатăр МТС-ĕнчи трактористка. Назарова юлташ Улатăр МТС-ĕнче 1933 çултанпа ĕçлет. Трактор ĕçĕсен планне вăл çулсеренех ирттерсе тултарса пынă. Хăйĕн тракторне тата ун çумне кăкарса ĕçлемелли инвентаре вăл срокченех юсаса çитернĕ, унтан вара икĕ трактористa вĕсен тракторĕсене юсама пулăшнă.

66. **Николай Александрович Костин**—Улатăр МТС-ĕнчи комбайнер-тракторист. Костин юлташ производствăллă заданисене çулсеренех ирттерсе тултарса пынă. Костин юлташ хăйĕн тракторне кăтартса панă срокра юсаса çитернĕ. Костин юлташ пуçарса янипе, Улатăр МТС-ĕнче çĕмĕрĕлнĕ е пачах юрăхсăра тухнă радиаторсене юсаса ĕçе юрăхлă тăваççĕ. Çапла Костин юлташ тракторсен 5 радиаторне юсаса çĕнетнĕ, вĕсем пурте ĕçлеме юрăхлă.

67. **Иван Павлович Лексин**—Улатăр МТС-ĕнчи тракторсен 9-мĕш бригадин бригадирĕ. Лексин юлташăн бригади хăйĕн тракторĕсене тата вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли инвентаре пĕтĕмĕшпех юсаса çитернĕ.

68. **Семен Васильевич Куделькин**—Улатăр МТС-ĕнчи тракторист. Куделькин юлташ хăйĕн тракторне тата ун çумне кăкарса ĕçлемелли инвентаре йăлтах кăтартса панă срокра юсаса çитернĕ.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Пысăк тухăçлă пахча-çимĕçшĕн кĕрешеççĕ

СĔРПУ. Çĕнĕ Ялти «Красный бригадир» колхозăн пахча-çимĕç мастерĕ Н. Шишкин юлташ кăçал майăн 1-мĕш тĕлне пасарта çĕнĕ пахча-çимĕçсем сутмалла тăвассишĕн тăрăшса ĕçлет. Мартăн 25-мĕш тĕлне унăн бригади парниксенче 100 рама сухан 40 рама помидор, 100 рама ир ӳсекен купăста вăрлăхĕсене лартнă.

— Эпĕ пахча-çимĕçсем епле ӳснине çулсерен сăнаса тăратăп. Сăнаса пынă тăрăх, кăçал уйрăмах арбуз ăнăçлăн пулмалла. Çавăнпа колхоз пире арбуз лартса тума 2 гектар çĕр уйăрса пачĕ.

Шишкин юлташăн бригади халĕ арбуз лартмалли çĕр лаптăкне çемçетме тислĕк пухать, арбуз вăрлăхне акса калча тума парниксем хатĕрлет. Кушкăр пуçне бригада 1942 çулта хăйĕн парникĕсенче пахча-çимĕç калчисене виçĕ хутчен акса ӳстерме обязательство илчĕ.

Шишкин юлташ «Цивильстрой» колхозри пахча-çимĕç бригадин бригадирĕпе Сотников юлташпа ăмăртса ĕçлет. Майăн 1-мĕш тĕлне ĕççыннисене симĕс сухан тата ытти пахча-çимĕçсем пама хатĕрленекен колхозсем районра татах та пур.

Лĕпсер ялсоветне кĕрекен «Коснария» колхозăн пахча-çимĕç мастерĕ Константин Маркович Марков, 60 çула çитнĕ çын пулсан та, халĕ, çĕршыв отечественнăй вăрçă туса пынă вăхăтра татах та лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Унăн виçĕ ывăлĕ нимĕç фашисчĕсене хирĕç вăрçă фрончĕсенче хастарлăн çапăçаççĕ. Марков юлташ ертсе пынипе колхозăн пахча-çимĕç бригади апрелĕн 10-мĕш тĕлне парниксенче 60 рама помидор, 20 рама ир пулса çитекен купăста тата 40 рама симĕс çимĕçсен вăрлăхĕсене акнă.

Иртнĕ çул районри колхозсем 216 гектар ытла пахча-çимĕç лартса тухрĕç. План тăрăх 180 гектар çине лартмалла пулнă. 1942 çулта пирĕн колхозсен пахча-çимĕçе 200 гектар çинче лартса тумалла. Правительство панă плана ирттерсе пурнăçа кĕртме районри колхозсем тимлĕн хатĕрленеççĕ. Ăна эпир кăçал ытлашшипех те пурнăçлама пултаратпăр.

Район колхозсем валли пахча-çимĕç вăрлăхĕсем çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ. 8 колхоз, хăйсен пахчисенче ӳстерсе, пур тĕрлĕ çимĕçсен вăрлăхĕсене те ытти колхозсене сутмалăх та туса илчĕç.

Пахча-çимĕçсене ытларах лартас, вĕсене пысăк тухăçлăн туса илес ĕç хелĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине районри колхозсем лайăх ăнланаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем парниксене хума 6.872 лав тислĕк, пахча-çимĕçсем лартмалли çĕр лаптăкĕсем çине тăкма 4.960 лав тислĕк хатĕрленĕ, 140 центнер кĕл, 105 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Кăçал пахча-çимĕç туса илес ĕçре социализмлă ăмăртăва татах та анлăнрах сарса, çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн кĕрешетпĕр, çĕршывпа Хĕрлĕ Çара пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса паратпăр.

М. БЛИНОВА.
Çĕрпӳ районĕн пайĕн агрономĕ.

Вăрлăх тупма тăрăшмаççĕ

СĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). «Большевик» завод çумĕнчи подсобнăй хуçалăхăн кăçал çĕр лаптăкĕ 20 гектара яхăн çитмелле (иртнĕ çулта 13,52 гектар пулнă). Ун çине, хуçалăх заведующийĕ А. Сердитов юлташ каланă тăрăх, купăста 2,5 гектар, хăяр 1,5 гектар, помидор 1 гектар, çĕрулми 8 гектар ытла лартмалла.

Ку аван. Анчах пахча-çимĕçсем туса илесси çĕр лаптăкне ӳстернипех пулмасть-ха, ăна лартма тивĕçлĕ хатĕрленни кирлĕ. Çакна вара заводри профорганизаци руководителĕсемпе дирекци кирлĕ пек ăнланса илмен. Вĕсем подсобнăй хуçалăха план туса панипех лăпланса ларнă. Кирлĕ вăрлăхсене ăçтан, мĕнле майпа тупмалла? Çак ыйтăва паянхи кунччен те заводра татса паман. Вăрлăхсем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçсем çавтери япăх пыраççĕ; кăшман вăррисĕр пуçне, урăх нимĕнле пахча-çимĕç вăрри те çук.

— Çĕрулми 5 тонна пур, анчах вăл çителĕксĕр, татах 8 тонна кирлĕ пулать,—тет хуçалăх заведующийĕ Сердитов юлташ.

— Ăçтан тупма шутлатăр?

Ку ыйтăва хирĕç Сердитов юлташ ответлеме пултараймасть. Мĕншĕн тесен вăл «март уйăхĕн 18-мĕшĕнче çеç ĕçе кĕнĕ».

— Çак кунсенче пĕр çынна çула май колхозсене кĕрсе çĕрулми пирки калаçма ятăмăр. Темле, ĕç тухас çук пуль. Мĕнех тума пултарĕ вăл,—ответлерĕ Сердитов юлташ.

Вăрлăх çитменни çинчен профсоюз комитечĕн председателĕ Конюхов юлташ та лайăх пĕлет. Анчах ăна хăвăртрах тупса хатĕрлес тĕлĕшпе вăл нимĕн те тумасть, ку ыйтăва вăл паянхи кунччен те завком ларăвĕнче те е пленумра сӳтсе явман. Чăнах та парторганизаци çак кунсенче пулса иртнĕ хăйĕн ларăвĕнче подсобнăй хуçалăх çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен кĕске отчет итленĕ, решенисем йышăннă. Анчах йышăннă решенисене пурнăçлама тытăнман-ха.

Подсобнăй хуçалăхăн 100 рама вырнаçмалăх парник пур. Паянхи куна унта нимĕнле ĕç те тумаççĕ, вăл япăх са кайнă, 100 рамăран 10 рамăн çеç кантăкĕсем пур.

Ялхуçалăх инвентарĕсем те çителĕклĕ мар. Паянхи куна 4 плугпа 4 кĕрçесĕр пуçне урăх нимĕн те çук, сӳресем пур, анчах çĕмрĕк, вĕсене юсама тытăнман, туртăм вăйĕ те çителĕксĕр.

Вăхăт кĕтмест, суракине тухмалли кунсем çывхарсах килеççĕ. «Большевик» заводăн руководителĕсен хăйсен подсобнăй хуçалăхĕ çинчен ытларах шухăшламалла, ăна конкретнăй пулăшу памалла.

Х. ЛИСИН.

ÇУРАКИНЕ ХАСТАРЛĂН ХАТĔРЛЕННĔ ÇĔРТЕ

СĔНТĔР. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Кашмаш ялсоветĕнчи «Свобода» колхоз членĕсем çуракине тухма хастарлăн хатĕрленеççĕ. Колхоз 30 центнер фосфорит çăнăхĕ турттарса килчĕ. Колхозниксем 90 центнер кĕл, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 35 центнер фекали пухнă. Вăрлăхлăх тырăсене сортласа, тивĕçлĕ кондицие çитернĕ. Ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене тата кӳлмелли хатĕрсене юсаса çитернĕ. Çавăн пекех Çатракассинчи «Малалла» колхоз та çуракине лайăх хатĕрленет. Лашасене лайăх апат çине тăратнă, çамрăк лашасене ĕçе хăнăхтараççĕ.

Г. АКИМОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 9-мĕшĕнче фронтра нимĕнле пăлла улшăнусемех те пулман.

Тĕрĕсрех палăртнă тăрăх, апрелĕн 7-мĕшĕнче противникăн малтан пĕлтернĕ пек 51 самолет мар, 63 самолет пĕтерсе тăкнă.

Апрелĕн 8-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсем çинче нимĕçсен 25 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 8-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 4 танкне, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 15 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 50 лавне, 22 полевой тата зенитнăй орудине, 11 миномётне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, противникăн пехотине 2 батальона çити çапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн часть (Хĕвеланăç фрончĕ) вăйлăн çапăçнă хыççăн нимĕçсен 40 блиндажне йышăнса илнĕ. Противникран 3 оруди, 11 пулемет, 35 винтовка тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Блиндажсемпе окопсенче тата çулсем çинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай выртса юлнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 900 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Олейник лейтенантăн летчикĕсен звени 2 кун хушшинче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен «Ю—52» йышши 4 самолетне, аэродромсем çинче 17 самолетне пĕтерсе тăкнă. Герман лейтенантăн звени çав вăхăт хушшинчех сывлăшри çапăçусенче противникăн 5 самолетне, аэродромсем çинче 14 самолета пĕтерсе тăкнă.

* * *

Радыгин юлташ ертсе пынипе пирĕн 5 боец (Калинин фрончĕ) нимĕçсем йышăнса тăракан Х. ялне çĕмĕрсе кĕнĕ. Ялта красноармеецсем çумне колхозник Савенков юлташ хутшăннă. Гитлеровецсем пирĕн боецсем тата колхозник персе тăнă çурта çавăрса илме хăтланнă. Анчах та 10 салтакĕ вилсе выртсан тата 9-шĕ амансан, нимĕçсен ирĕксĕрех каялла чакмалла пулнă. Пирĕн пырса çитнĕ часть вара çав яла йышăнса илнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансен отрячĕ, П. юлташ командир пулса ертсе пыраканскер, нимĕçсен обозĕ çине пырса тапăннă. Совет патриочĕсем автоматсенчен персе тата гранатăсем ывăтса 98 нимĕç салтакне пĕтерсе тăкнă, 2 автомашина тата çар грузĕсем тиенĕ 3 лава тытса илнĕ.

* * *

Çапăçу хирĕнче пăлла мар нимĕç салтакĕн, Гельмут ятлăскерĕн, çырăвне тупнă. Аяларахра çав çырăвăн уйрăм вырăнĕсене илсе пичетлетпĕр:

«Эпĕ фронтра 16 кун çеç пурăнтăм-ха. Анчах та эпĕ çав кунсенче курса чăтса ирттернине нимĕнле сăмахсемпе те каласа пама çук... Вырăс партизанĕсем питĕ чăрсăр. Вĕсем—тĕнчери чи хăраман çынсем. Эпир иртсе пынă хуласемпе ялсене пирĕн çар çĕнтерсе илеймен-ха. Вăрçă тăххăрмĕш уйăх пырать ĕнтĕ.. Анчах эсир, Мюнстерта пурăнса, фронтра мĕн пулса иртнине пĕлместĕр. Сире улталаççĕ. Çĕрулми шуратса Германия çуллен 4,5 миллион тонна çĕрулми çухатнине эсир пĕлетĕр. Çав çĕрулми сая ан кайтăр тесе, хаçатсем сире çĕрулмине шуратмасăр çиме сĕнеççĕ. Ку ĕнтĕ питĕ тĕлĕнмелле. Анчах та пирĕн войскăсем Хĕвелтухăçĕнче куллен миçешер пуç çухатнине эсир, тен, нихăçан та пĕлеймĕр. Пирĕн полка вăйлăн лăскарĕç. Иккĕмĕш батальона пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Унран пĕр пĕчĕк ушкăн çеç тăрса юлнă. Нумай пулеметсем, автомашинăсем, боеприпассем вырăссен аллине лекрĕç. Эпĕ кирек мĕнле вăрçă та жертвăсăр пулманнине лайăх пĕлсе тăратăп ĕнтĕ. Анчах та фронта пырса тăракан резервсем çавтери хăвăрт ирĕлсе пырсан—эпир çĕнтерессине шанасси пĕтет вара. Ку вăл чи хăрушши пулса тăрать. Салтаксем вăрçасшăн мар ĕнтĕ,—вăл тин килнĕ çынна тӳрех курăнать. Кунта çăмăллăн хавхаланса каланă сăмахсене илтеймĕн. Пурте кунтан тĕрĕс-тĕкел те мĕн май пур таран хăвăртрах тухса каясшăн çунаççĕ. Ытти-хытти вара хуть те мĕнле пултăр...»

* * *

Вырăс войскисем хĕснипе Калинин облаçĕнчи Семеновская ялĕнчен каялла чакнă чухне гитлерла ирсĕрсем çав ялти мĕнпур çынсене, 140 çынна, пулеметсенчен персе пăрахнă. Çакăн хыççăн вĕсем пур çуртсене те вут тивертсе çунтарса янă. Вутра мĕнпур çуртйĕрсем, выльăх-чĕрлĕх тата йывăр аманнă темиçе колхозник çунса кайнă.

* * *

Глогау хулинчен (Германия) хĕвеланăçнерехри вăрмансенче нимĕç çарĕнчен тарса кайнă салтаксен йышлă ушкăнĕсем пытанса çӳреççĕ. Нумаях пулмасть çар влаçĕсем çав дезертирсене хупăрласа илсе тытма хăтланнă. Анчах та вырăнти çынсем систернипе салтаксем хăрушлăхран аванах çăлăнса юлнă. Хупăрласа илсе тытасси нимĕнсĕрех пĕтсе ларнă.

* * *

Камчаткăра Çурçĕрти Нациллĕ Коряк округĕнче пурăнакан ĕççыннисем вăрçă пуçланнăранпа Совет Союзĕн оборона фондне 2 миллион та 393 пин тенкĕ укçан, 4 миллион та 593 пин тенкĕлĕх государство заемĕсен облигацийĕсем, 65 пин тенкĕлĕх тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем, 24 хура-хăмăр тилĕ, 70 соболь, 940 тăлан тата Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем валли 25 пин тенкĕлĕх ăшă тирлĕ япаласем хывнă.

Апрелĕн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пăлла улшăнусемех те пулман.

* * *

Темиçе кун каярах Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсем пирĕн чаçсене контратакăлама хăтланнă. Нимĕçсен командованийĕ çапăçăва хăйĕн нумаях пулмасть инçетри тылран килсе çитнĕ резервĕсене кĕртсе янă. Вăйлă çапăçусем хыççăн нимĕçсен контрнаступленине сирсе пăрахнă. Фронтăн пысăках мар участокĕнче кăна противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 4.470 çын пĕтнĕ. Гитлеровецсен, чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳссе, оборонăна куçма тивнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем халăх пурăнакан пĕр пункта, нимĕçсем вăйлăн çирĕплетнĕскере, йышăнса илнĕ. Ялăн урамĕсенче гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 850 çын вилсе е аманса выртса юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник, хăйĕн малтан çухатнă позицийĕсене каялла тавăрас тесе, контратака тунă. Совет боецĕсем гитлеровецсене артиллерирен тата пăшалсемпе пулеметсенчен пенипе кĕтсе илнĕ. Тăшман, çапăçу хирне хăйĕн çĕршер виллисене пăрахса хăварса, каялла чакнă. Тепĕр участокра пирĕн пĕр часть нимĕçсен виçĕ танкне тата салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Капитан Торопуев командир пулса ертсе пыракан совет самолечĕсен эскадрильи çĕрле тăшманăн аэродромĕ çине ăнăçлăн вĕçсе пырса тапăннă. Летчиксем нимĕçсен 10 самолетне пĕтерсе тăкнă тата 11 самолетне сиенленĕ.

* * *

Нимĕç войскисен тылĕнче (Хĕвеланăç фрончĕ) кĕрешекен партизансен Б. юлташ ертсе пыракан отрячĕ чугунçул çинче минăсем хурса тухнă та нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 150 ытла гитлеровец вилнĕ тата аманнă. Юнашар районра партизансем чугунçул çинчи пысăк кĕпере сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен боеприпассем турттарса пыракан поездне ӳпĕнтернĕ.

* * *

Нимĕçсен 162-мĕш пехотнăй дивизийĕн 303-мĕш полкĕнчи 10-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Вальтер Плате çапла каласа панă: «Манăн урара вырăссен тыткăнри çыннинчен хывса илнĕ çăматă, манăн çире вырăссен вилнĕ салтакĕнчен хывса илнĕ ăшă кĕпе. Хĕл пуçланас умĕн пире Гитлерăн приказне вуласа пачĕç, çав приказ тăрăх кашни салтакăн хăйне валли ăшă çипуçсем тата урана тăхăнмаллисем хăйĕнех тупмалла. Хăйне хăй сыхласа усрайман тата хăйĕн урисене е аллисене тăм илтерсе янă салтака, хăйне хăй юриех амантнă çын вырăнне хурса çар сучĕн аллине памалла. Гитлерăн тепĕр приказĕнче тыткăна илнĕ çынсенчен мĕнпур ăшă çипуççене пурне те туртса илмелле тесе тӳрех каланă. Полкра цынга тата ытти тĕрлĕ чирсемпе чирлекенсем питĕ нумай. Чиртен сывалма санитарнăй пункта каякан çынсене симулянт тесе шутлаççĕ. Ăна вара вăл вăрçасшăн мар тата Германин чысне хӳтĕлесшĕн мар теççĕ».

* * *

Нимĕç салтакĕ Гердт Адлер çумĕнче ун патне ашшĕ-амăшĕсем çырса янă çырăва тупнă. Вĕсем çав çырура çапла çыраççĕ: «Эсĕ Хĕвелтухăç фронтне лекнишĕн эпир питĕ те хурланса ӳкрĕмĕр. Эсĕ питех те çамрăк вĕт-ха... Противник тапăнса килнĕ чухне эсĕ канава е ăçта та пулсан урăх çĕре пытан. Штабра посыльнăй пулса ĕçлеме вырнаçма тăрăш:.. Малти позицисене лекесрен мĕнле пулсан та пăрăнса юл».

* * *

Финляндире выçлăх сарăлнăçемĕн сарăлса пырать. Хуласемпе ялсенче выçăхса вилнĕ çынсен виллисене кулленех тупаççĕ. Тойяла хулинчен инçех мар ларакан поселоксенчен пĕринче февральпе март уйăхĕсенче мĕнпур çынсенчен 13 проценчĕ вилсе пĕтнĕ.

Нимĕç танкĕсем каялла тараççĕ

КĂНТĂР ФРОНЧĔ. (ТАСС спецкорĕ). Пирĕн чаçсем нимĕçсен оборонине татти-сыпписĕр тыра-тыра çапаççĕ. Нимĕçсем е пĕр участокра, е тепĕр участокра пире хирĕç контратакăсемпе ответлеме пăхаççĕ. Çапла хăтланнă чухне вĕсем хăйсен пехоти умне танкĕсене яраççĕ.

Пĕр участокра пирĕн стрелковăй часть тăшманăн хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ вырăнне атакăланă. Пехотăн пĕр подразделенийĕпе пĕрле çапăçăва старши лейтенант Прочухановăн батарейи кĕнĕ. Пехота атакăласа, нимĕçсен хÿтĕлесе тăракан хуралне çĕмĕрсе тăкнă. Çав вăхăтра пирĕн артиллеристсем тăшман оборонин ни шалти позицийĕсем çине пеме тытăннă. Пехота та хăйĕн ĕçне ăнăçлăн туса пынă. Пирĕн боецсем фашистсен хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ вырăнĕнчи блиндажсене тытса илсе, çăрт тÿремĕ çине кăларнă. Кунта вĕсене тăшман минометсенчен вăйлăн персе кĕтсе илнĕ. Анчах стрелоксем тыçĕнченех тыракан Прочуханов батарейинчи боецсем çавăнтах хăйсен юлташĕсене пулăшма çитнĕ. Батарейăран персе пирĕн артиллеристсем нимĕçсене шăплантарнă. Тăшманăн минометнăй батарейисене çынисемпе-мĕнĕпех пĕтерсе тăкнă.

Тăшман çаплах хирĕç тăнă-ха. Нимĕçсен минометчĕсем, пиçетре, хÿтĕ вырăнта тăрахансакерсем, пирĕн артиллеристсем çине пеме тытăннă. Çапах Прочухановăн боевой расчечĕсем пĕр самантлăха та пеме чарăнман. Çав вăхăтра, вăрçă чи хĕрсе çитнĕ самантра, тăшман çапăçăва 12 танк кĕртнĕ. Ун хыççăнтан мотопехота пынă. Прочуханов батарейи çавăнтах хăйĕн вутне тăшманăн машинисем çине куçарнă. Тÿрĕ пĕлсе персе, тăшманăн 2 танкне çĕмĕрнĕ, ытти машинăсем, пирĕн боецсем йышлăнлă рубеж çывăхне пыма хăраса, хăвăртрах каялла çавăрăннă та çăрт хыçнелле кĕрсе кĕрнĕ. Çав вăхăтра Прочуханов батарейинчи боецсем, хăйсен вутне мотопехота çине куçарса, ăна тепĕр хыççăнчен тарма май панă. Фронтăн тепĕр участокĕнче фашистсен танкĕсен атакине танксене хирĕç пемелли орудисемпен персе сирсе пăрахнă. Тăшманăн танкĕсем, сарлака стройпа пыракансерсем, сасартăк çăрт хыççăнчен килсе тухсан, артиллеристсем çавăнтах хăйсен туппине усă позицие илсе тухнă та тăвăллăн пеме тытăннă. 3 танк пĕрин хыççăн тепри чарăнса ларнă. Ыттисем хăвăртрах каялла çавăрăннă та вĕçĕн вĕçĕ çитнĕ таран каялла тарнă.

В. ХОДАКОВ.

Пирĕн войскăсен наступленийĕ хастарлăхĕ ÿссех пырать

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Урса кайсах гитлеровецсем пирĕн наступленине тăвакан чаçсене хирĕç тăраççĕ. Вĕсем артиллерирен те, минометсемпе пулеметсенчен те тăвăллăн переççĕ, уйсенче минăсем хураççĕ, хирĕç тăмалли вăйлăн çирĕплетнĕ вырăнсем хатĕрлеççĕ, час-часах хăйсен эрех ĕçтерсе ÿсĕртнĕ салтакĕсене «психикăллă контратакăна» хăвалаççĕ. Анчах çапла пулин те, тăшман Совет воинĕсен наступленин тăвас хастарлăхне хавшатаймасть. Вăйлă çапăçура пирĕн часть тăшманăнне 7 оруди, 6 миномет, 2.000 ытла снаряд, 500 граната, 6 пулемет тытса илнĕ тата тăшманăн боеприпассен 2 складне çунтарса янă.

Пирĕн боецсем тăшманăн хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ вырăнĕсене ăнăçлăн аркатса пыраççĕ. Пирĕн пĕр подразделени пĕр талăкрах тăшманăн 6 дзотне тата 9 огневой точкине пĕтерсе тăкнă. Кĕçĕн лейтенант Бирюк, сехет çурă çапăçса, пулеметран 30 фашиста персе вĕлернĕ. Хăюллă Бирюк тăшманăн позицийĕ патне сиктермесĕр шăвăнса пырать те гитлеровецсем çине сасартăк пеме тытăнать. Кĕске вăхăт хушшинче ĕнтĕ вăл 100 ытла фашиста пĕтерсе тăкнă.

Е. КОРЛЯВИЧЕВ.

Анкарари судра Папен çине „тапăнни“ çинчен калакан провокациллĕ ĕçе пăхни

АНКАРА, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Паян Анкарари суд Ататюрк бульварĕнче бомба çурăлса кайни çинчен калакан ĕçе малалла пăхма тытăннă. Çак ĕçпе пĕр сăлтавсăр айăпланакан совет гражданĕсем Павловпа Корнилов суда тепĕр темиçе кунлăха куçарма ыйтнă, мĕншĕн тесен вĕсене çак ĕçпе айăпланакан Турци гражданинĕн, Абдурахман провокаторăн показанийĕсене выръсла куçарнине апрелĕн 6-мĕшĕнче тин панă тата Абдурахман пособникĕн Сулейманăн показанийĕсене выръсла куçарнине вĕсене ку таранччен те паман. Кунсăр пуçне тата Павловпа Корнилов çакăн пек заявлени тунă: суд Турцин процессуальнăй нормисене пăснă. Çав нормăсем тăрăх прокурорăн суда чĕнмелли свидетельсен ячĕсемпе адресĕсене айăпланакансене малтанах пĕлтермелле. Прокурор çавна туман.

Гитлер агенчĕсем çакăн пек суя хыпар сарса çÿренĕ: Папен çине «тапăнас» ĕçе Турцири «коммунистсен» темĕскерле ушкăнĕ организациленĕ, çав ушкăнра çак ĕçпе айăпланакан Турци гражданĕсем Абдурахманпа Сулейман иккĕшĕ те тăнă, имĕш. Судăн паянхи ларăвĕнче çавăн пек сÿпĕлтетнине çĕмĕрсе татах та тепĕр хут çапса аркатма тĕл килнĕ. Павлов Абдурахмана чылай ыйтусем панă. Çав ыйтусем çине панă ответсенче Абдурахманăн çакна ирĕксĕрех йышăнма лекнĕ: Абдурахман хăй те, бомба çурăлса кайнă вырăнта вилнĕ Омер та, Сулейман та коммунистсен партийĕнче нихăçан та тăман, тата Абдурахманăн тусĕсемпе юлташĕсем хушшинче пĕр коммунист та пулман та, çук та. Павлов Абдурахманран вăл хăйĕн показанийĕнче Мускавпа çыхăну тытса тăнă тесе асăнакансен Ниязипе Фахри сăн-сăпачĕсем çинчен каласа кăтартма ыйтнă. Абдурахман çапла ответ панă: Ниязине вăл нихăçан та курман, Фахрие вăл икĕ хутчен çеç курнă пулать, анчах та унăн сăн-сăпатне вăл пачах астумасть, çавăнпа каласа кăтартма та пултараймасть. Абдурахман каланă тăрăх, следстви вăхăтĕнче Стамбул полицийĕнче ăна Ниязин фотокарточкине кăтартнă, анчах Ниязине хăйне вăл, Абдурахман, нихăçан та курман.

Суд касхи ларура айăпланакан совет гражданĕсен судри пур показанисене те выръсла куçарнине илмелли правăна тăтăшах пăсса пынă. Выръсла куçарнисене паман пирки çав айăпланакан совет гражданĕсем суд следствийĕ мĕнле пынине пĕлме пултараймаççĕ, çавăнпа та вĕсене айăплама хăтланакан провокациллĕ суя элекрен хăйсене хÿтĕлеме те пултараймаççĕ. Судья çапла каланă: суд следствийĕн материалĕсене Павловпа Корнилова Турци чĕлхипе кăна çырса памалла, мĕншĕн тесен çав материалсене выръсла куçарса парасси судăн «ĕçĕ те мар» имĕш. Вара Павлов çапла каланă: тĕрмере пĕччен тытакан камерăра ларса, выръсла куçарса паракана манăн мĕнле тупмалла-ха,—тенĕ. Çакна хирĕç судья çапла ответ панă: куçаракансем тĕрмере те пур, тенĕ.

Судьяпа прокурор суда чĕнмелли свидетельсен ячĕсемпе адресĕсене пĕлтерекен хута Павловпа Корнилова хăй вăхăтĕнчех панă тесе темиçе хутчен те каланă хыççăн, «сасартăк» çакă паллă пулса тăрать: «суд аппаратĕн йăнăшĕпе» çав хута Павловпа Корнилова паян судăн икĕ ларăвĕ хушшинче пулса иртнĕ перерывра тин панă мĕн. Çавăнпа вара суд ларăвне апрелĕн 15-мĕшне куçармалла тесе решени йышăннă.

Германири тата оккупациленĕ çĕршывсенчи террор

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 9-мĕш. (ТАСС). Германирен килекен сведенисем çакăн çинчен пĕлтереççĕ: Германире тата вăл оккупациленĕ çĕршывсенче гестапо террорĕ юлашки вăхăтра питех те анлăн сарăлса кайнă. Германи хаçачĕсем, кирек хăшне илсе пăхсан та, гитлеровецсен халăха асаплантарса вĕлерекен юхтаракан ĕçĕсем çинчен кунсеренех çыраççĕ.

Çапла «Гамбургер фремденблатт» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Ганновер хулинче «çăкă япаласене фронта янă чухне хăшпĕрне вăрласа юлнăшăн» Карль австриеца асаплантарса вĕлермелле приговор йышăннă, çул çитмен австриеца Лейфрида çавăнтăлăх 10 çуллăха тĕрмене хупмалла тунă. Берлинри суд приговорĕ тăрăх, «государствăна сутнăшăн» тесе 42 çулти Иоганна Кузатц хĕрарăма асаплантарса вĕлернĕ. «Государствăна сутнă» тесех Иосиф Крюле, унăн çумăй çул хушши каторгăра пулнăскере, асаплантарса вĕлернĕ. Данцигри уйрăм судăн приговорĕ тăрăх вут тĕртнĕшĕн тесе 19 çулти Ганс Шванкене асаплантарса вĕлернĕ.

«Дагенс нюхетер» хаçат çапла пĕлтерет: Францире, Германин çар сучĕ йышăннă приговор тăрăх, 5 голландеца персе пăрахнă. Çав голландецсене вĕсем Францирен тухса тарма, Голландин Индийĕн войскисен ретне тăма шутланă тесе айăпланă. «Дейче цейтунг ин Нидерланден» хаçат çапла çырнă: пĕр голландеца, диверсиллĕ ĕç тума хăтланнăшăн тесе, персе пăрахнă. Диверсие тунă пулсан Германин çар поезчĕ ÿпĕнсе кайма пултарнă имĕш. «Нимĕç влаçĕсен мероприятийĕсене хирĕç саботаж тума чĕннĕшĕн» виçĕ голландеца асаплантарса вĕлернĕ.

Норвегири духовенство гитлеровецсене хирĕç

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: пур Норвеги священникĕсем те, гитлеровецсем Норвеги тĕнне хĕснине хирĕç протестлесе, хăйсен обязанноçĕсене туса пыма пăрахнă. Стокгольмран пĕлтернĕ тăрăх, Норвегири фашистла пичетре Квислинг статьи тухнă. Çав статьяра Квислинг Норвеги священникĕсем умне ультиматум тăратнă: священниксем пурте патриотла движенирен пĕтĕмпех аякра тămалла. Апла тумасан, Квислинг священниксене питех те хытă айăплассипе хăратать.

Норвегин Вашингтонри дипломатиллĕ миссийĕ çапла пĕлтерет: Осло хулинчи епископа Бергграва тата Норвегин ытти 6 епископне Квислинг халĕ хăйсен килĕнче арестлесе усрать. Квислингăн влаçĕсем Бергграва апрелĕн 5-мĕшĕнче проповедь калама чарнă, мĕншĕн тесен халăх хушшинче пăлханусем туха каясран хăранă. Анчах та çав кун чиркÿре тата чиркÿ умĕнчи площадьре те тем чухлĕ халăх пухăннă. Никам организацилемесĕрех патриотла пысăк демонстраци пуçланса кайнă. Пухăннă халăх Норвеги гимне юрласа янă. Хăраса ÿкнĕ гитлеровецсем штурмовиксен отрячĕсене чĕнсе илнĕ. Нумай çынсене арестленĕ.

Германин укçа-тенкĕ ыйтăвĕ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). «Гамбургер фремденблатт» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, государство секретарĕ Рейнгардт Германири укçа-тенкĕ ларăвĕ çинчен каланă май, çапла пĕлтернĕ: 1942 çулта Германин çар расхочĕсем 95 миллиард маркăна çитмелле, государствăн пĕтĕм доходĕ те 49 миллиард марка кăна пулать. Çав шутран 35 миллиард марка налогсен шучĕпе пухăнмалла. Государство парăмĕ вăрçă пуçланнăранпа 37,5 миллиард маркăран 140 миллиард маркăна çитнĕ. Нумай предприятисен укçа-тенкĕ тÿлĕшпе лару-тăру питех те йывăр.

Зиши правительстви Германипе Италин Ливири войскисем валли çар хатĕрĕсем парса тăрать

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Англин Вашингтонри посольстви заявлени пичетлесе кăларнă. Çав заявленире çапла каланă: «Вашингтонра илнĕ сведенисем тăрăх, иртнĕ пĕр çул çурă хушшинче Çурçĕр Африкăран Франци илсе пынă мĕнпур фосфатсенчен çуррине кая мар çиччĕмĕшĕх Германие ăсатса тăнă. Кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕпе 15-мĕшсем хушшинче Марсельпе Тулонран Тунисе 5 пароходран кая мар ăсатнă, çав шутрах «Бугарони» ятлă суднăна ăсатнă, ун çинче Италин грузовикĕсем пулнă.

Заявленире малалла çапла каланă: Францирен Çурçĕр Африкăна ăсатса тăракан таварсен хисепĕ Франци колонийĕсем ыйтакан таварсен йышĕнчен те иртет текен сведенисем пур.

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔ ШВЕЦИ ТЕРРИТОРИЙĔ ÇИЙĔПЕ ВĔÇНИ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 9-мĕш. (ТАСС). Швеци телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 6-мĕшĕнче 7 сехетре Германи самолечĕ 200 метр çÿллĕшĕнче Швецин Марстранда районĕнчи Кăнтăр-Хĕвеланăç çыранĕ çийĕпе вĕçсе иртсе кайнă.

—o—

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче чĕртавар ытларах туса кăларма тăрăшаççĕ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче хĕçпăшалсем тума кирлĕ чи паха чĕртаварсене тупассине ÿстерес тата вĕсене усăллăрах валеçес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ. Англипе Америкăн чĕртаварпа пĕрле усă курмалли комитетĕнчи США представителĕ Батт хăйĕн Рузвельт патне янă çырăвне пичетлесе кăларнă; унта вăл çав комитета тунăранпа чĕртаварпа тата ресурссемпе лайăхрах та тухăçлăнрах усă курмалли плана тăвас тĕлĕшпе ытти пĕрлешнĕ çĕршывсен представителĕсемпе канашлани çинчен калать.

Комитет çитес вăхăтрах хальхи чĕртаварпа тата ресурссемпе лайăхрах та тухăçлăнрах усă курас тĕлĕшпе хăйĕн сĕнĕвĕсене парĕ.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче правительствăн «Металлс Резерв Компани» ятлă компанин докладне пичетлесе кăларнă. Çав докладра çапла каланă: стратегиллĕ чĕртавар тăвакан уйрăм хуçасене укçа парса пулăшнине пула халĕ ĕнтĕ боксит, хром, марганец, вольфрам, ванадий, пăхăр, хура тăхлан тата цинк ытларах тупма пулать, тенĕ.

„АМЕРИКА ÇАРĔН КУНĔ“

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Ĕнер, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем тĕнчен пĕрремĕш вăрçине хутшăннă куна, «Америка çарĕн кунне» уявласа ирттернĕ.

Нью-Йоркри чи паллă «Пятое авеню» ятлă урамра парад пулнă. Парадра Америка çарĕн тинĕсĕр çинчи, тинĕс çинчи вăйĕсем тата ытти чаçĕсем те, мĕнпурĕ 25 пин çын хутшăннă. Парада Нью-Йорк халăхĕ пĕр миллион çын тухнă. Çавăн пекех тата парадсем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен ытти нумай хулисенче те пулса иртнĕ. Америка çарĕн руководителĕсем—çар министрĕ Стимсон, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕсĕр çинчи çарĕн командующийĕ генерал Макнэр, генерал Крюгер тата ыттисем те ĕнер «Америка çарĕн кунне» хисеплесе радио тăрăх сăмахсем тухса каланă.

МАРШАЛЛПА ГОПКИНС АНГЛИЕ ПЫРСА ÇИТНĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Маршалл тата Гопкинс икĕ сехет хушши Черчилльпе чылай ыйтусем çинчен канашланă.

Çав калаçу хыççăн ирттернĕ пресс конференцире Маршалл çапла каланă: вĕсем Англие килнин тĕллевĕсенчен пĕри вăл—Англин хĕçпăшаллă вăйĕсен руководителĕсемпе пĕтĕмĕшлĕ ыйтусем тăрăх каласса татăлассипулса тăрать,—тенĕ.

Ютçĕршывсенче

▲ Грецирен тарса тухма пултарнă çынсем çапла пĕлтереççĕ: Греци халăхĕ хăйĕн çĕршывĕнчи çар объекчĕсене Англи самолечĕсем атакăланине ырласа, питех те хапăлласа кĕтсе илет. Çав атакăсем питех те ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Çавăн пек, Пирей çине тапăннă чухне бомбăсем таможня çурчĕ патĕнче итальянецсен якорь çинче тăракан 6 эсминецĕнчен 5-шĕ çине тĕлех пырса ÿкнĕ.

▲ Куба президенчĕ Баттиста тата оборона министрĕ Кексайер мĕнпур провинцисен губернаторĕсемпе тата [illegible]

Австралин çар министрĕ Форд тухса калани

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 9-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Мельбурнри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Сиднейре Австралин çар министрĕ Форд сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: Австралин лару-тăрăвĕ ĕлĕкхинчен нумай лайăхланчĕ. Анчах çапах та тăшман тапăнассине кĕтсех тăмалла. Австралире чылай пысăк хĕçпăшаллă вăйсем организациленĕ. Çав вăйсем çĕршыва хÿтĕлесе хÿтĕлеме çителĕклĕ. Çав вăйсемех Австралирен контрнаступлени пуçласа ямалли база туса хурĕç.

Голланди Индийĕн губернаторĕн заместителĕ каланă тăрăх, Голланди Инди авиацийĕн пысăк пайне, çавăн пекех тата авиамеханиксен личнăй составне те Ява утравĕ çинчен Австралие куçарса илсе килме ĕлкĕрнĕ. Австралин çар министрĕ Форд çакăн çинчен пĕлтернĕ. Голланди çарĕсем Австралин хĕçпăшаллă вăйĕсен уйăрăлми пайĕ пулса тăраççĕ. Голланди офицерĕсене Макартур штабĕ çумĕнче ĕçлеме янă, çавăн пекех тата вĕсем союзниксен тинĕс çар вăйĕсен командованийĕ çумĕнче те ĕçлеççĕ.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Мельбурнран çапла пĕлтерет: союзниксен Австралири снабжени совечĕ Америкăпа Австрали войскисене снабжени тăратас ĕçе йĕркелесе пымалли плана йышăннă. Çав снабжени хĕçпăшала кивçен е арендăна памалли закон тăрăх килсе тăмалла. Снабжени совечĕ çавăн пекех тата типçĕр çинчи тата тинĕс çинчи транспорта контроль туса тăрас ĕçе те хăй аллине илнĕ.

БИВЕРБРУК БАГАМ УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ ПЫРСА ÇИТНĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Насау хулине (Багам утравĕсем çинчи тĕп хулана) апрелĕн 9-мĕшĕнче лорд Бивербрук пырса çитнĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Апрелĕн 4-мĕшпе 8-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Филиппин çинчи вăрçă ĕçĕсем, темиçе кунлăха лăпланса тăнă хыççăн, çĕнĕрен вăйланса кайнă. Японецсем, хăйсен вăйĕсене çĕнĕлле йĕркелесе, сылтăм флангра тата Батаан çурутравĕ çинчи фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче наступлени пуçласа яма хăтланаççĕ. Апрелĕн 3-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен японецсем артиллерирен персе хатĕрленме тытăннă, çавăн хыççăн вĕсем Америкăпа Филиппин войскисен позицийĕсене пысăк вăйсемпе темиçе хутчен атакăланă. Анчах çав атакăсем пурте ăнăçсăр пулнă. Апрелĕн 4-мĕшĕнче кăна, питех те пысăк çухатусем туса, японецсен пĕчĕк çитĕнусем тума май килнĕ, анчах çав çитĕнусене малалла сарса пыма вĕсем пултарайман. Японецсен атакăлакан чаçĕсене кашнинчех вăйлăн хирĕç тăрса кĕтсе илсе, вĕсене хăйсем малтан йышăнса тăнă позицисенех сирсе-сирсе пăрахнă. Японецсен атакисене танксем, артиллери тата пикировка тăвакан бомбардировщиксем пулăшса тăнă пулин те, вĕсем нимĕнех те тăваймаи.

Çакăнпа пĕрлех, японецсем çĕрлехи çĕттемпе усă курса, Батаан çурутравĕн хĕвелтухăçĕнчи çыранне, Америка войскисен тылне, анса юлма икĕ хутчен хăтланса пăхнă. Çакна тума японецсем 75 миллиметрлă орудисем вырнаçтарнă баржăсемпе усă курнă. Çыран патне çывхарса пырса, японецсем, хăйсен операцине пурнăçа кĕртес ĕçе çăмăллатас шутпа, çыран çине орудисенчен персе тăнă. Анчах çапах та японецсен операцийĕ ăнăçлă пулайман. Американецсем, çыранра вырнаçтарнă орудисенчен персе, темиçе баржăна путарнă, ытти баржăсем сапаланса кайнă. Японецсене пысăк çухатусем кÿнĕ.

Манила заливне кĕнĕ çĕрте вырнаçнă Коррегидор утравĕ çине бомбăсем пăрахасси пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех чарăнса ларнă. Апрелĕн 5-мĕшпе 6-мĕшĕнче утрав çине пĕре те вĕçсе пырса тапăнман.

Бирмăра, Китай войскисем Тоунгу хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнелле чакнă хыççăн тата Англи войскисем Проме хули патĕнчен чакнă хыççăн, кулла лару-тăру лăпланнă. Фронт линийĕ Проме хули патĕнчен 17 миля аякка раххра иртсе каять. Çав вăхăтрах Японин авиацийĕ активлăн кĕрешет. Вăл союзлă войскăсен малти позицийĕсем çине тата Бирмăран çурçĕр енчи хуласем çине бомбăсем пăрахать. Японецсем çавăн пекех тата Цейлон çинчи Коломба хули çине, Индин хĕвелтухăç çыранĕнчи Визагапатам тата Коканада хулисем çине бомбăсем пăрахнă. [illegible] (ТАСС).

Комсодсемпе заем уполномоченнăйĕсен отчечĕсене итлерĕмĕр

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяррăн çапăçма хĕçпăшалсемпе боеприпассем кăна мар, укçа-тенкĕ те нумай кирлĕ. Совет государствин аллинче питех те пысăк финанс ресурсĕсем пур. Вăл хисепре государство заемĕсене сарăмпе пухăнакан укçа-тенкĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакна ăнланса илсе, пирĕн районри ĕççынисем государствăна обязательнăй йĕркепе тÿлемелли парăмсене парса татнипе пĕрлех, Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемĕн укçине те тÿлесе татрĕç.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне районри ĕççынисем 447 пин тенкĕлĕх çырăннă. 1940 çулта çырăннипе танлаштарсан ку хисеп 46 пин тенкĕ ытларах.

Районри колхозниксемпе единоличниксем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне 186 пин тенкĕлĕх çырăннă. Вĕсем укçине срокчене тÿлесе татрĕç. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Кызыл-Чишме, Кивĕ Ахпÿрт, Анат Туçа, Татмăш ялсоветĕсен исполкомĕсем çумĕнчи селькомсодсем пултаруллă ĕçлерĕç. Кызыл-Чишме ялсоветĕ çумĕнчи комсод председателĕ Валиуллин юлташ, ялти финанс активĕпе тачăн çыхăнса ĕçлесе, заем укçине иртнĕ çулти июлĕн 19-мĕш тĕлнех пухса çитернĕ. Заем уполномоченнăйĕсем З. Минаев, Исхаков, Файзуллин, Садретдинов юлташсем заем укçине хăйсем малтан тÿлесе татрĕç.

Кызыл-Чишмери «Маяк» колхоз членĕсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне 75-шер тенкĕлĕх, колхоз председателĕ З. Минаев юлташ тата унăн заместителĕ Латыпов юлташ 500-шер тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тÿлесе татнă.

Çак цифрăсем ĕнтĕ районри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен укçа-тенкине социализмлă тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетнĕ çĕре хавхаланса паннине, çапла вара тăван çĕршыва пулăшма тăрăшнине уççăн кăтартса параççĕ.

Халĕ районра комсодсемпе заем уполномоченнăйĕсен ĕçĕсене пăхса тухасси пырать. Комсод председателĕсемпе заем уполномоченнăйĕсем рабочисен, служащисен тата колхозниксен пухăвĕсенче хăйсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне вырнаçтарас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен отчетсем туса параççĕ. Апрелĕн 5-мĕш тĕлне заем уполномоченнăйĕсемпе комсодсен отчетне 15 колхозра итленĕ. Отчетсем хыççăн подписчиксем заем облигацийĕсене тĕрĕслессине организациленĕ.

Анчах начар ĕçлекен комсодсемпе заем уполномоченнăйĕсем те пур-ха. Райçутĕç пайĕ, Патăрьел педучилищи, Чкаловски ялсоветĕ çумĕнчи комсодсем хăйсен ĕçне сÿрĕккĕн туса пыраççĕ. Çавна пула заем çырăнса илмиллĕ малтанхи сумми районри учительсем хушшинче 11.500 тенкĕлĕх, педучилищĕри преподавательсем хушшинче 3 пин тенкĕлĕх, Чкаловски ялповĕнче ĕçлекенсем хушшинче 3.300 тенкĕлĕх чакнă. Районри финанс пайĕпе перекет кассисен руководителĕсем вырăнсенчи комсодсен ĕçне çителĕксĕр ертсе пынине те палăртмалла.

Халĕ пулса иртекен общественнăй смотрсем начар ĕçлекен комсодсен председателĕсемпе заем уполномоченнăйĕсене тупса палăртрĕç. Вĕсене нумайĕшне ĕçрен кăлармалла пулчĕ. Халĕ эпир финанс ĕçне туса пыракан 83 çынна заем уполномоченнăйĕсем пулма уйăртăмăр, вăл шутра 43 хĕрарăм.

Т. ВАЛЕЕВ.

ВКП(б) Чкаловски райкомĕн секретарĕ.

КОМСОДСЕН ĔÇНЕ ЛАЙĂХЛАТМАЛЛА

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕ йышăннă тăрăх, февралĕн 20-мĕшпе мартăн 20-мĕш хушшинче комсодсемпе заем уполномоченнăйĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслÿ чылай çĕрте комсодсем хăйсен ĕçне çителĕксĕр туса пынине, заем уполномоченнăйĕсем сахаллине палăртрĕ. Мăн Шетмĕпе Мартынкасси ялсоветĕсенче заем уполномоченнăйĕсене çĕнĕрен суйласа лартнă. Çавăн пек районĕпе заем уполномоченнăйĕсене 178 çын суйланă, 24 ялсоветĕ çумĕнче комсодсен составне çирĕплетнĕ.

Анчах районра заем уполномоченнăйĕсене уйăрса лартман ялсоветĕсем те пур-ха. Сăмахран, Исаково ялсоветĕнче заем уполномоченнăйĕсем 5 çын кирлĕ, хальхи вăхăтра 3 çын кăна. Ялсовет исполкомĕн вĕсене тупса çитерессишĕн тăрăшмалла ĕнтĕ.

Т. ИВАНОВ.

Районри перекет кассин заведующийĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ИЗВЕЩЕНИЕ

12 апреля, в 2 часа дня, в зале Заседаний Верховного Суда Чувашской АССР созывается совещание председателей КОМСОДОВ и главных (старших) бухгалтеров всех предприятий, учреждений и организаций г. Чебоксары.

Руководителям предприятий и учреждений надлежит обеспечить явку.

Горкомпочком.
Горкомсод.

Кок-сагыз акма çĕре мĕнле хатĕрлемелле

Кок-сагыз акмалли çĕре 22—25 сантиметр тарăнĕш сухаламалла. Хăш çĕре çакăн тарăнĕш сухалама йывăр пулсан, плуг çумне çĕре тарăн илсе пыракан шĕврешке лартса сухаламалла.

Пусуçаврăнăшне кура кок-сагыз акасси ир пулакан тырăсем хыççăн килсе тухать пулсан, вăл тырăсене пуçтарнă хыççăнах çĕре 4—5 сантиметр хулăнĕш кăпкалатса хăвармалла, кайран вара, 15—20 кун иртнĕ хыççăн, кăпкалатнă çĕр çинче çумкурăкĕсем тухсан, кок-сагыз акмалли участока 22—25 сантиметр тарăнĕш сухаламалла. Кок-сагыза кая юлса пулакан тырă-сенпе пахча-çимĕçсем хыççăн акма лекет пулсан, вăл тырăсене пуçтарнă хыççăнах тăпрана кăтартнă тарăнăш чухлĕ сухаласа хумалла. Сухаласса плугăн тимри умĕнче тăпран çиелти сийне илсе пыракан тепĕр тимĕрлĕ плугпа сухаламалла.

Çуркунне кок-сагыз акмалли çĕре май килнĕ таран иртерех хатĕрлемелле. Кок-сагыз акăнмалли участока, кĕркунне [illegible]



урлăраххăн (диагональпе) ярас пулать. Çапла тунипе сухаланă тăпрана 1—1,5 сантиметр хулăнĕш вĕтетсе тикĕслетмелле. Çак ĕçе хăйĕн вăхăтĕнче туса иртермелле. Сухаланă тăпра хăвăрт типет, çакă вара кок-сагыз вăррисене шăтса тухма чарса тăрать. Çапла, çуркунне кок-сагыз акăнмалли участоксене питĕ те хăвăрт хатĕрлесе хумалла.

Хĕл касиччен хытă пирченсе ларнă çĕре волокушăпа çеç тикĕслетсе вĕтетме май çук пулсан, сÿрелес пулать. Сÿрелени те пулăшмасть пулсан, культиваци тăвас пулать, е тепĕр хут сухаласа, хыççăнах сÿрелес пулать. Çакăн пек вырăнсенче кок-сагыз вăррисене хăвăрт шăтса тухмалла тăвас тесен, культиваци тунă е сÿреленĕ хыççăн çĕре каткăпа пусарас пулать, тата кун хыççăн тимĕр шăллă çăмăл сÿресемпе сÿрелес пулать. Çакăн пек пирчек çĕр лаптăкĕсем çине кок-сагыза акмалли акнинчен лайăхрах.

Пирĕн колхозсенче волокушăсем халĕ çук та пекех. Анчах та вĕсем колхозсене питĕ кирлĕ. Тата ăна колхозсем [illegible]

Кок-сагыза кĕркунне акас пулсан, ăна çĕртме çийне акас пулать. Кок-сагыз акмалли участоксене çу касиччен тăтăшах лайăх пăхса тămалла. 2—3 хутчен сÿрелес тата культиваци тăвас пулать, çумкурăкĕсене пĕтерсех тăмалла. Культивацине сийĕн-сийĕн тумалла; пĕрремĕш хут 5—6 сантиметр тарăнĕш, юлашкинчен 12—14 сантиметр тарăнĕш кăпкатас пулать.

Кок-сагыз акмалли участоксем çинче çĕртме сухине сентябрĕн юлашки кунĕсемпе октябрĕн малтанхи кунĕсенче туса ирттермелле. Çак вăхăтрах вĕсем çине тислĕк тата минераллă удобренисем тăкмалла.

Кĕркунне кок-сагыз акмалли çĕре 35—40 кун малтан сухаласа хăйĕн [illegible]

Профессор Л. ПЕЛЬЦИХ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — [illegible]

НТ 732 [illegible]